# Анне юрри



**Чăваш Республикинчи Наци библиотеки «Ялан янра, сăпка юрри» акци ирттернĕ.**

Чăваш ачине тăван чĕлхепе чи малтан мĕн авалтан сăпка юрри урлă паллаштарнă. Пепке ан канăçсăрлантăр, лăпкă çывăртăр тесе кăкăр ĕмĕртекенсем ăна çĕрĕпех ĕнĕрлеме пултарнă. Сăпка юрри – чăваш халăх культурин никĕсĕ.

Шел те, компьютер саманинче çак пуянлăх çухалса пырать. Шăпах авалхи çак йăлана упраса хăварас тĕллевпе йĕркеленĕ те акцие. Профессионалсемпе фольклористсем пĕрчĕн-пĕрчĕн пуçтарса 70 ĕç таран пухма пултарнă. Вĕсен хушшинче сĕм аваллăхран пирĕн кунсем таран çитнисем те, сăвăçсем хайланисем те пур.

Акци географийĕ те питĕ анлă: Шупашкарпа Çĕнĕ Шупашкартан темиçе ушкăн, Тутарстантан, Пушкăртстанран, Челябинск, Эрĕнпур облаçĕсенчен, Крым Республикинчен, Мускавран…

Паллă поэт Расул Гамзатов: «Анне юрри – тĕнчери тĕп юрă», – тенĕ. Чăваш сăпка юрри те ламран лама куçса ĕмĕрех пурăнасса шанас килет.

**Вера АРХИПОВА.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**